# Хумма Çеменĕ
# (1903-1936)



«Тăван чĕлхине вĕренсе
çитеймен мĕскĕнсем çын та
пулаймаççĕ»

Хумма Çеменĕ

Презентацие хатĕрлекенĕ Аслă Чемен шкулĕнче 8-мĕш класра вĕренекен Ежова Екатерина

2019 çул

# Кун- çулĕ

Хумма Çеменĕ (чăн ячĕ-шывĕ Семен Фомич Фомин) — чăваш çыравçи. 1903 çулхи авăн уйăхĕн 10-мĕшĕнче Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрваш ялĕнче, чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Ялти пуçламăш, Шăхасанти икĕ класлă (1917), унтан ялти икĕ сыпăклă шкулсенче вĕреннĕ. Вăл питĕ ăслă пулнă, тăвата çул вĕренсенех ултă çул вĕреннисенчен иртттерне. 1920 çулта Хусанта тухса тăракан «Канаш» хаçат редакцине тăлмач ĕçне вырнаçнă, ĕçленĕ вăхăтрах çĕр йĕркелӳ техникумĕн каçхи уйрăмĕнче вĕреннĕ. Хаçатăн литература сотрудникĕ, пай заведующийĕ, ответлă секретарĕ тата редактор çумĕ пулса ĕçленĕ.

# Хаçат редакцийёнче вăй хуни

Чăваш автономине туса хунă хыççăн редакципе пĕрле Шупашкара куçнă. 1926 çулта Вăтам Азипе Кавказри çĕршывсене çитсе курнă. Пĕр вăхăт Ашхабадра тухса тăракан «Туркменская искра» хаçат редакцийёнче вăй хунă. 1927–1932 çулсенче Шупашкарти типографире корректор ĕçĕсене туса пынă. 1932–1936 çулсенче Чăваш кĕнеке издательствинче илемлĕ литература кĕнекисене пичете хатĕрленĕ.

# Пултарулăхĕ …

Хумма Çеменĕ калавсемпе сăвăсем, повеçсем, роман, очерксемпе статьясем çырнă, вырăсларан чăвашла Н. Некрасов, А.Кольцов, А.Фет, Ян Райнис, Г.Тукай, У. Уитмен, В.Гюго, Д.Рид тата ытти çыравçăсен хайлавĕсене куçарнă. Пĕрремĕш «Çиçĕм çиçет, çуталать» сăвви 1920 çулта,«Выçлăх çул» ятлă пĕрремĕш калавĕ 1923 çулта пичетленсе тухнă. Унăн хайлавĕсене шкул программине кĕртнĕ. Çавăн пекех вăл çырнă ĕçсем Чăваш литературин антологине вырнаçнă. 1934 çултанпа СССР Çыравçисен пайташĕ пулса вăй хунă.

# Çеçпĕл хăвачĕллĕ ăста

Калавсенчи тĕп сăнанарсем-комсомолсем, хĕрлĕ гвардеецсем, ялта çĕнĕ пурнăç купалакансем. Повеçсемсĕр пуçне вăл драмасем те çырнă, сăмахран, «Анюкпа Ванюк». Унăн юррисем радиопа халĕ те янăраççĕ. Хумма Çеменĕ çавăн пекех Чĕкеç псевдонимпа паллă. Сăвăç чăваш сăмахне  Çеçпĕл Мишши пекех чĕререн юратнă, унăн аталанăвĕшĕн пĕтĕм ĕмĕрне панă.

# Кĕнекисем

Чăваш сыравçин, сăвăçин, драматургĕн, тăлмачĕн хайлавĕсем пурĕ 10 кĕнекере пичетленнĕ.

**Паллăрах кĕнекисем:**

- «Юрă-сăвăсем» (1922),
- «Выçлăх çулсем» (1924),
- «Ача чухнехи» (1931),
- «Суйласа илнисем» (1960),
- «Штрум» (1975),
- «Пирĕн вăй» (1982).

# Пултаруллă çыравçă

1936 çулхи авăн уйăхĕн 25-мĕшĕнче самай вăхăт хушши йывăр чирленĕ хыççăн Хумма Çеменĕ вилнĕ.



Тавтапуç